26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 СЕНТЯБРЬ 12 ВЫРСАРНИКУН 182(6419) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Авӑн ҫапас ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне ӳстерер!

Тырпулсене пухса кӗртес ӗҫ республикӑра пысӑк хӗрӳлӗхпе пулса пырать. Хӗрлӗ Ҫарӑн геройла вонӗсем отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче ҫӗнтерӳ туса пынипе хавхаланса, ӗҫ хресченӗсем уйхир те тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Тырпула хӑвӑртрах вырса пӗтерме, авӑна вӑхӑтра ҫапса пустарма, государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен парса татма вӑйсене хурса ӗҫлеҫҫӗ.

Партипе правительство кӑтартса панине пурнӑҫа кӗртсе пырса, Чӑваш республикинчи чылай колхозсем авӑн ҫапас ӗҫе тӗрӗс организацилерӗҫ, ҫак ответлӑ ӗҫе пысӑк ӑнӑҫлӑхпа туса пыраҫҫӗ. Авӑна хӑвӑртрах ҫапма вӗсем хӑйсен пур молотилкисене те ӗҫе яна, тырра тӑпачӑпа та ҫапаҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи „Красная Армия“ колхоз членӗсем тыра вырма тухсан 4-мӗш кунӗнчех авӑн ҫапма тытӑнчӗҫ, молотилка ҫапса тӑкнӑ тырра, итем ҫинченех государства тырӑ пама тытӑнчӗҫ. Сентябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне „Красная Армия“ колхоз республикӑра пурнинчен малтан авӑн ҫапса пӗтерчӗ, государствӑна тырӑ памалли обязательствӑсене тӳр йышши тырӑсемпе пӗтерсе срокчен пурнӑҫларӗ.

Вӑрнар районӗнчи Уравӑшри „Майӑн 1-мӗшӗ“ колхозӑн „БДО-34“ маркӑллӑ молотилкисем иккӗ. Икӗ молотилкипе те тыра вырма тухсан 5-мӗш кунӗнчех авӑн ҫапма тытӑннӑ. Кунта авӑна икӗ сменӑна кун-ҫӗрӗн ҫапаҫҫӗ. Сменӑра 80 центнер тыра ҫапса илмелле пулсан, колхозӑн Судуков юлташ ертсе пыракан 4-мӗш бригади „БДО-34“ маркӑллӑ молотилкӑпа 153—157 центнер тыра ҫапса кӑларать. Тыра вырма чухнехи пекех, авӑн ҫапма ҫӗрте те колхозниксемпе колхозницӑсем кунне икшер-виҫшер норма тултараҫҫӗ, тырпула тӑккаламасӑр тирпейлӗн пухса кӗртессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тырпула ҫакан пек тирпейлӗн пухса кӗртекен колхозсем пирӗн республикӑра сахал мар. Кӗлте турттарса капана хывас, авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ пама ӗҫсем Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи колхозсенче уйрӑмах ӑнӑҫлӑн пулса пыраҫҫӗ. Район сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тырӑ вырса пӗтерчӗ, сентябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне пухса кӗртме тырпулӑн 51,6 процентне капана хывнӑ, 32,8 процентне ҫапса государствӑна тырӑ памалли обязательствӑна 56,9 процент пурнӑҫланӑ. Ку районри руководительсем, колхоз председателӗсем ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн кӑтартӑвӗсене тӗрӗс пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Ҫапах та паянхи куна республикӑри колхозсенче авӑн ҫапас ӗҫ питӗ лайӑх хӑвӑртлӑхсемпе пулса пырать теме ҫук-ха. Иртнӗ 1942 ҫулта сентябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне республика пӗтӗм тырпулӑн 33,5 процентне ҫапса пустарнӑ пулсан, кӑҫал 27,6 процент ҫеҫ ҫапса пустарнӑ. Районсенчи ҫӗр органӗсем, хӑшпӗр руководительсем, уйрӑм колхоз председателӗсем авӑн ҫапас ӗҫе пек хӑвар[illegible]. Тӗслӗхрен, Сӗнтӗр районӗнчи колхозсем тырӑ вырса пустарнипе ҫине ытла ӗнте, анчах кӗлтесем капана сахал хывнӑ-ха, авӑн мӗн пурӗ те 28,8 процент ҫеҫ ҫапнӑ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе малтанхи кунсенче район ӑмӑртӑвӗ малти ретре пынӑ пулсан, халӗ чылай каялла юлчӗ.

Хӗрлӗ Чутай районӗнче сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тырӑ вырса пӗтернӗ пулсан та, авӑн ҫапас ӗҫ сӳрӗккӗн пырать, государствӑна тырӑ парас ӗҫе кирлӗ пек организациленӗмен.

Тӑвай районӗнчи хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем авӑна кӗркунне ҫапас шухӑш-кӑмӑлсемпе лараҫҫӗ. Кунта халӗ те вырса пулман тырӑ тӑрать, молотилкӑсем нихӑш колхозра те туллин ӗҫ кунӗ кураҫҫӗ. Район государствӑна тырӑ пама тӗлӗшпе те кунран кая юлса пырать.

Тӗштырӑсене пухса кӗртес ӗҫ авӑн ҫапнипе вӗҫленет. Ахальтен мар халӑх ҫапла калать: уйрипе мар, кӗлетри тырпула шутла, тесе. Авӑн ҫапас ӗҫе вӑраха ярас пирки тыра ҫумӑн тӑккаланать. Ҫавна пула государство умӗнчи обязательствӑсене пурнӑҫласси, МТС ӗҫӗсемшӗн натуроплата тӳлесси те хыҫа юлать.

Авӑн ҫапас ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне пур колхозсенче те ӳстермелле. Пур хӗтӗрленӗ плана срокчен пурнӑҫа кӗртессишӗн тата Сталин юлташ ертсе пыракан ... пама социализмлӑ ӑмӑртӑва татах вӑйлатмалла. Молотилкӑсене тӗп ӗҫе ямалла. Вӗсемпе 20 сехетрен кая мар ӗҫлемелле. Машинӑсем ҫитмен колхозсенче те вӑхӑта ирттермелле мар, авӑна та пачӑсемпе ҫапассине организацилемелле.

Тырпула ҫапса пустарасси ялхуҫалӑх ӗҫӗсен чи кирлӗ тапхӑрӗ пулать. Ку тапхӑрта тӗрӗс туса пырсан ҫеҫ пирӗн колхозсем государство умӗнчи обязательствӑсене срокра ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗртме пултараҫҫӗ. Авӑн ҫапас ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне икӗ хут, виҫӗ хут ытларах ӳстерер. Государствӑна тырӑ памалли 1943 ҫулхи плана срокчен пурнӑҫлар.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Вырӑнти топливо промышленность управлени предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулхи август уйӑхӗнчи итогӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ вырӑнти топливо промышленность управлени предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Улатӑрти, Шупашкарти, Елчӗкри тата Канашри леспромхозсем мала тухнӑ тесе йышӑннӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Канаш леспромхозӗнчен илсе Улатӑр леспромхозне (директорӗ Горланов юлташ, хула совет исполкомӗн председателӗ Гуськов юлташ) пама йышӑннӑ тата ӑна ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисемпе инженерла-техникла работниксене, служащисене премилеме 20.000 тенкӗ памалла тунӑ.

Шупашкар леспромхозне (директорӗ Соколов юлташ, хула совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ) ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисемпе инженерла-техникла работниксене тата служащисене премилеме пӗрремӗш преми—15.000 тенкӗ пама йышӑннӑ.

Елчӗкри леспромхоза (директорӗ Кадышев юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Осипов юлташ) тата Ҫӗмӗрлери леспромхоза (директорӗ Хлыщев юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Носков юлташ) иккӗмӗш премисене—10.000-шер тенкӗ пама йышӑннӑ.

Совнарком август уйӑхӗнче вута хатӗрлес тӗлӗшпе Куславкка, Комсомольски, Хӗрлӗ Чутай леспромхозӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Ҫавӑнпа пӗрлех Совнарком август уйӑхӗнче Етӗрне, Шӑмӑршӑ, Йӗпреҫ, Ишлей, Кувакино, Пӑрачкав тата Шӑхасан леспромхозӗсем япӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Пӗр ача та шкул тулашӗнче юлмасть

КУКЕҪ. Лапсар ялсоветӗнчи Крупская ячӗпе тӑракан тата «Дружба» колхоз членӗсем шкул ачисем валли пӗр кун хушшинче 62 япала пухрӗҫ. Вӑл шутра 3.000 тенкӗ укҫа, 17 килограмм ҫӑм, 4 килограмм пыл пухӑннӑ. Фронтовик арӑмӗсем (вӗсен виҫшер пӗчӗк ача) Александра Савельева тата Дария Петрова икӗ мӑшӑр ботинка, 400 грамм ҫӑм, Смирнов колхозник пӗр мӑшӑр атӑ пачӗҫ. Вӗсене кура ытти колхозниксем те тӗрлӗрен ӑшӑ япаласем чылай параҫҫӗ. Ку ӗҫе ватӑ стариксем те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Сентябрӗн 10-мӗшӗпе 20-мӗшӗ хушшинче районра фронтовиксен ҫемьисемпе шкул ачисем валли ӑшӑ япаласем пухас тӗлӗшпе вунӑкунлӑх ирттереҫҫӗ. Ҫак вунӑкунлӑхра ӑшӑ япаласем чылай пухса, Шупашкар районӗ кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче пӗр ачана та шкул тулашӗнче хӑвармасть

И. СМИРНОВ.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1943 ҫулхи август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завода виҫҫӗмӗш премипе памалла тунӑ.

Оборона Халӑх Комиссарӗн ПРИКАЗӖ

Мускав. № 269. 1943 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ

1943 ҫулхи февралӗн 23-мӗшӗнче 56-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизин 254-мӗш гвардейски стрелковӑй полкӗнчи гварди рядовойӗ Александр Матвеевич **Матросов**, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ Чернушка ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫӑвӑн татси паракан минутинче, тӑшман дзочӗ патне ҫӗмӗрсе кӗнӗ те амбразурӑна хӑйӗн ӳчӗпе витсе лартнӑ, ҫапла вара хӑй пӗтсе, наступлени туса пыракан подразделенине ӑнӑҫу тума май панӑ.

СССР Верховный Совет Президиумӗн 1943 ҫулхи июлӗн 19-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх гварди рядовойне **Матросов** юлташа хӑй вилнӗ хыҫҫӑн Совет Союз Геройӗн званине панӑ.

Матросов юлташӑн паттӑрла аслӑ ӗҫӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн мӗнпур воинӗсемшӗн вӑрҫӑри паттӑрлӑхпа геройлахӑн примерӗ пулса тӑма тивӗҫлӗ.

Совет Союз Геройӗн гварди рядовойӗн Александр Матвеевич **Матросовӑн** ятне ӗмӗрлӗхех асра хӑвармалла тӑвас шутпа **ҫапла хушатӑп:**

1. 56-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизин 254-мӗш гвардейски стрелковӑй полкне:

„Александр **Матросов** ячӗпе тӑракан 254-мӗш гвардейски стрелковӑй полк“ тесе ят парас.

2. Совет Союзӗн Геройне гварди рядовойне Александр Матвеевич **Матросова** Александр Матросов ячӗпе тӑракан 254-мӗш гвардейски полкӑн 1-мӗш ротин списокне ӗмӗрлӗхех кӗртсе хӑварас.

Оборона Халӑх Комиссарӗ
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 10-мӗшӗнче ПАВЛОГРАД енче пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ, 20 километртан пуҫласа 40 километр таран малалла куҫса, БАРВЕНКОВО хулине, ЧАПЛИНО хулипе чугун ҫул узелне, Харьков облаҫӗнчи ПЕТРОВСКАЯ ятлӑ район центрне, Днепропетровск облаҫӗнчи ПЕТРОПАВЛОВКӐПА МЕЖЕВАЯ ятлӑ район центрӗсене, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 140 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсем — ТУРИ БИШКИН, ШЕБЕЛИНКА, ЧЕПЕЛЬ, ПРОТОПОПОВКА, АСЛА КАМЫШЕВАХА, ЗАХАРО-МАРЬЕВКА, АНДРЕЕВКА, СТЕПАНОВКА, СЛАВЯНКА, ВОЗНЕСЕНКА, ПРЕОБРАЖЕНКА, ТРОИЦКОЕ, НИКОЛАЕВКА, ФЕДОРОВКА, ПОДГОРОДНОЕ, ҪӖНӖ ПАВЛОВКА тата чугун ҫул станцийӗсем — БРАГИНОВКА, ФУРСОВО, КИРПИЧЕВО, ДЕМУРИНО, ПРОСЯНАЯ пур.

СТАЛИНО хулинчен (Донбасс) хӗвеланӑҫнерехри тата кӑнтӑрхӗвеланӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, 10 километртан пуҫласа 20 километр таран малалла куҫса, ВОЛНОВАХА хулипе чугун ҫул узелне, КРАСНОГОРОВКА хулине, МАРЬИНКА ятлӑ район центрне, АЛЕКСАНДРОВКА, АЛЕКСАНДРИНКА, ҪӖНӖ ТРОИЦКОЕ, НИКОЛАЕВКА, БУГАС, ПЛАТОНОВКА, ДМИТРИЕВКА ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тата ЕЛЕНОВСКИ КАРЬЕР, КИВӖ МИХАЙЛОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ.

Пирӗн АЗОВ ТИНӖСӖН ҫыранӗ тӑрӑх наступлени туса пыракан ҫарсем, тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, МАРИУПОЛЬ хулипе портне тытса илнӗ.

БРЯНСК хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, 5 километртан пуҫласа 10 километр таран малалла куҫнӑ. Халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра: НЕМЕРИЧИ, ГУЛИЧИ, МАРЬИНО, УСАХИ, САВИНО, ВЕРЕЖИЧИ, СУКРЕМЛЬ, КУЯВА, СУРЬ, УЛЕМЛЬ ятлӑ пунктсене илнӗ.

БРЯНСК хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, Десна шывне урлӑ каҫса, Десна шывӗн хӗвеланӑҫ енче КАМЕНЬ, КРЫМСКИ БУГОР, РОЗОВКА ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тытса илнӗ, халӗ Новгород-Северский хулине тытса илесшӗн ҫапӑҫаҫҫӗ.

ПРИЛУКИ хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. 10 километртан пуҫласа 15 километр таран малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла, вӑл шутра Сумы облаҫӗнчи ЛИПОВАЯ ДОЛИНА ятлӑ район центрне, тытса илнӗ.

ХАРЬКОВРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пырса ҫапӑҫнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

СМОЛЕНСК енче пирӗн ҫарсем хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисене лайӑхлатасшӑн ҫапӑҫнӑ.

Сентябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 76 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 24 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Павлоград енче пирӗн ҫарсем, ӑнӑҫлӑн наступлени туса пырса Барвенково хулине, Чаплино хулипе чугун ҫул узелне (Днепропетровск облаҫӗ), Харьков облаҫӗнчи Петровская ятлӑ район центрне, Днепропетровск облаҫӗнчи **Петропавловкӑпа Межевая** ятлӑ район центрӗсене тытса илнӗ. Славянск хулипе Барвенково хули хушшинчи чугун ҫул ҫинче пирӗн ҫарсем 600 вагона ҫити тытса илнӗ, вӑл шутран 400 вагонӗ тырӑпа тата продовольствипе, темиҫе вунӑ вагон боеприпассемпе, медикаментсемпе, тумтирпе тата завод оборудованийӗпе. Унсӑр пуҫне тата 12 паровоз, боеприпассен складне, горючи складне, инженерла пурлӑх складне, снарядсем, минӑсем, гранатӑсем тата патронсем нумай тытса илнӗ. Совет танкисчӗсем, аркатса тӑкнӑ тӑшмана хӑваласа пырса, нимӗҫсене йывӑр ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем 2000 нимӗҫе ытла пӗтерсе тӑкнӑ, 30 танк тата хӑй кӗллӗн ҫӳрекен 8 туппа персе ҫӗмӗрнӗ. Чылай гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнчи ҫарсем, Кальмиус шывӗ ҫинче нимӗҫсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Мариуполь хулипе портне тытса илнӗ.

Сталино хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем малалла вӑйлӑн тапӑнса пынӑ та, хӑвӑрттӑн пырса ҫапса, Волноваха хулипе чугун ҫул узелне тытса илнӗ. Пирӗн ҫарсем Красногоровка хулине тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти чылай пунктсемпе чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ. Кун каҫиччен ҫапӑҫусенче 2500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫит[illegible] ӗлерсе пӗтернӗ. 8 йывӑр танк, 3 тупа тата 200 пулемет ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем пӗр чугун ҫул станцийӗн районӗнче кӑна нимӗҫсен 14 танкне, тӗрлӗ калибрлӑ 74 туппине, 160 пулемет, 1500 винтовкӑпа автомат ытла, 70 автомашина, боеприпассен складне, тырӑ складне тата тӗрлӗрен ҫар грузӗсем тиенӗ 146 вагона тытса илнӗ. Тӑшманӑн 300 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Брянск хулинчен ҫурҫӗртерехре ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла тытса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем, малалла куҫса пырса, 1000 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 23 танк, 31 тупӑ, ҫар грузӗсем тиенӗ 62 вагон тата горючи тултарнӑ темиҫе цистерна тытса илнӗ. Совет ҫарӗсем ҫав тери хӑвӑрттӑн тапӑнса пынипе, нимӗҫсем уйрӑм участоксенче минӑсем лартса тухма та ӗлкӗреймен. Пирӗн боецсем ҫулсем хӗрринче мина шаршанӗсем нумай тытса илнӗ.

Брянск хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, юханшыв урлӑ хывнӑ каҫӑсемшӗн ҫапӑҫса, Десна шывӗ урлӑ каҫнӑ. Десна шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринче кирлӗ вырӑн тытса илнӗ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ те халӗ Новгород-Северский хулине тытса илесшӗн ҫапӑҫаҫҫӗ. Пӗр чаҫри боецсем тӑшманӑн пӗр тӗреклетнӗ пунктне тытса илнӗ чухне гитлеровецсен икӗ ротине пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн подразделенисем вӑрмансене тарса сапаланса пӗтнӗ нимӗҫ салтакӗсен тӗчӗк ушкӑнӗсене шыраса тупса тыткӑна илеҫҫӗ.

* * *

Прилуки хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Тӑшман васкасах ҫӗнӗ резервсем кӳрсе пырать, контратакӑсем туса совет чаҫӗсем малалла куҫса пынине чарса лартма хӑтланать. Пӗр соединени боецӗсем тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ та, хӑйсем тапӑклӑн пырса ҫапса, нимӗҫсене каялла ывӑтса янӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 60 ҫын вилли таран выртса юлнӑ тата ҫунса кайнӑ 5 танк тӑрса юлнӑ. Тепӗр участокра пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса пыракан отрядсем тӑшмана хыҫҫӑнах хӑваласа пыраҫҫӗ, нисга чарӑнса тӑма май памаҫҫӗ. Пӗр бригада танкисчӗсем нимӗҫсен каялла чакакан колоннин тылне тухнӑ та гитлеровецсен батальонне аркатса тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Харьковран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пырса ҫапӑҫнӑ. Тӗреклетнӗ чылай пунктсене тытса илнӗ. Пӗр соединени боецӗсем тӑшман танкӗсемпе мотопехотин темиҫе хаяр контратакине сирсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 300 вилли ытла выртса юлнӑ тата нимӗҫсен ҫӗмӗрсе тӑкнӑ 12 танкӗпе 60 автомашини тӑрса юлнӑ.

* * *

Могилев облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ ҫӗрле тӑшманӑн пӗр пысӑк гарнизонне тапӑннӑ. Хаяр ҫапӑҫура партизансем нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ытла вӗлернӗ е амантнӑ. Нимӗҫсен полк командирне те вӗлернӗ. Тыткӑна илнисем пур. Полк штабӗн документчӗсене, 18 пулемет тата винтовкӑсемпе автоматсем нумай тытса илнӗ. Ҫав отрядри партизансемех тӑшманӑн автоколоннине аркатса тӑкнӑ. Боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан 10 автомашинӑна ҫӗмӗрсе пӑрахнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 82-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 168-мӗш полкӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ подполковник Вильгельм Матцнер ҫапла каласа панӑ: „Ман полка вырӑссем аркатса тӑкрӗҫ. Темиҫе кун хушшинче полк 900 ҫын ҫухатрӗ, вӗсенчен пӗрисене вӗлернӗ, теприсене амантнӑ. 400 салтакпа офицер ытла тыткӑна лекрӗҫ. Август уйӑхӗнче эпӗ Берлинра пултӑм. Кунта эпӗ ӗлӗк хампа пӗрле служить тунӑ тусӑма, полковника тӗл пултӑм. Вӑл унччен Францире тӑнӑ. Нумай пулмасть ытти офицерсен ушкӑнӗпе пӗрле ӑна Францирен чӗнсе илнӗ те Хӗвелтухӑҫӗнчи фронта ямалла тунӑ. Полковник мана ҫапла каларӗ: Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫуллахи кампани пӗтӗмӗшпех пӗтсе ларни тата вырӑссен ҫарӗсем ӑнӑҫлӑ наступлени туса пыни нимӗҫ офицерӗсене хӑратса пӑтраштарса ячӗ. Эпӗ Берлин гарнизонӗнче тӗл пулса калаҫнӑ хӑшпӗр офицерсем Германи тӗпсӗр шӑтӑка кӗрсе ӳкрӗ тесе шутлаҫҫӗ, терӗ“.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсен сывлӑхне ҫирӗплетме

КАЛИНИНО. Тӑван ҫӗршыва сыхлакансен сывлӑхне ҫирӗплетмелли фонда колхозсемпе колхозниксем сӗт пама тытӑнчӗҫ. Государствӑна сӗт-ҫу памалли обязательствӑна срокчен парса татса, пирӗн районти колхозсем халӗ ҫак фонда 11.264 литр сӗт панӑ. Вӑл шутра Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз 1855 литр, Шӗнерти «1-ое мая» колхоз 1650 литр, Туҫи Мӑратри «Клевер» колхоз 1075 литр сӗт панӑ.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

Шупашкар хулинчи промышленность предприятийӗсен уйрӑмах палӑрнӑ рабочийӗсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Производство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑшӑн Шупашкар хулинчи промышленность предприятийӗсен уйрӑмах палӑрнӑ ҫак рабочийӗсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Надежда Николаевна **Батуринӑна**—мастера.
2. Анна Дмитриевна **Гаранинӑна**—работницӑна.
3. Моисей Менделеевич **Гольдмана**—цех начальникне.
4. Агния Дмитриевна **Дроздовӑна**—мастера.
5. Алексей Григорьевич **Ермака**—мастерской начальникне.
6. Нина Николаевна **Ивановӑна**—цех технологне.
7. Александра Карповна **Карповӑна**—работницӑна.
8. Николай Тимофеевич **Кушникова**—старши мастера.
9. Иван Павлович **Лебедева**—цех начальникне.
10. Александр Львович **Лившица**—завод начальникӗн заместительне.
11. Георгий Матвеевич **Матвеева**—радиоузел начальникне.
12. Алексей Алексеевич **Макарова**—цех начальникне.
13. Димитрий Никифорович **Морозова**—автогараж механикне.
14. Федор Иванович **Наумова**—прессовщика.
15. Надежда Федоровна **Орловӑна**—работницӑна.
16. Виктор Михайлович **Петрушкина**—старши мастера.
17. Алексей Алексеевич **Плешанова**—технически контроль отделӗн начальникӗн заместительне.
18. Михаил Кузьмич **Ращупкина**—каменщика.
19. Елизавета Сергеевна **Румянцевӑна**—старши мастера.
20. Сергей Константинович **Суворова**—главнӑй энергетика.
21. Екатерина Васильевна **Сытника**—мастера.
22. Павел Давыдович **Тарбаева**—штукатура.
23. Алексей Васильевич **Федотова**—мастерской начальникне.
24. Иван Федорович **Федорова**—каменщика.
25. Петр Тимофеевич **Фролова**—цех парторгне.
26. Илья Алексеевич **Челнокова**—заводӑн главнӑй инженерне.
27. Нина Васильевна **Шеховцовӑна**—работницӑна.
28. Татьяна Яковлевна **Яковлевӑна**—работницӑна.
29. Анастасия Степановна **Ярославцевӑна**—жилищно-коммунальнӑй отделӑн начальникне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 ҫулхи сентябрӗн 11-мӗшӗ.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

Ҫӗмӗрлери „Большевик“ экстракт завочӗн главнӑй механикне И. Я. Синенко юлташа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Завод оборудованийӗ питӗ лайӑх пӑхса усранӑшӑн Ҫӗмӗрлери «Большевик» экстракт завочӗн главнӑй механикне Иван Афанасьевич **Синенко** юлташа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 ҫулхи сентябрӗн 11-мӗшӗ.

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛА АМĂРТУ СЕНТЯБРĔН 10-МĔШЕ ТĔЛНЕ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Мĕнсемĕш вырăн йышăннă
Сĕнтĕрвăрри	1
Вăрнар	2
Октябрьски	3
Канаш	4
Етĕрне	5
Шупашкар	6
Красноармейски	7
Çĕрпӳ	8
Куславкка	9
Вăрмар	10
Калинино	11
Йĕпреç	12
Шăхасан	13
Советски	14
Ишлей	15
Çĕмĕрле	16
Улатăр	17
Комсомольски	18
Сĕнтĕр	19
Элĕк	20
Тăвай	21
Первомайски	22
Хĕрлĕ Чутай	23
Кувакино	24
Елчĕк	25
Чкаловски	26
Пăрачкав	27
Шăмăршă	28

Амăрту пуçланнăранпах пĕрремĕш вырăнта пыракан Сĕнтĕрвăрри районĕ сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли çулталăкри плана 62,7 процент тултарнă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлетпĕр

ВАРНАР. Район кĕрхи тырăсене ăнăçлăн акса пĕтерчĕ. Халĕ кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсем вăйланса пыраççĕ. Колхозсене Вăрнар поселокĕнчи рабочисемпе служащисем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем (пурĕ 200—250 çын) уборка ĕçĕнче каярах юлса пыракан колхозсене тырă вырса пĕтерме, кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапма пулăшаççĕ. Çавна пула кая юлса пыракан колхозсем малта пыракан колхозсемпе танлашрĕç. Сталин ячĕпе тăракан, «Пионер», «Новые Сонары», «Апнер» колхозсем халĕ пур ĕçсемпе те ытти колхозсемпе танах пыраççĕ. Вĕсем Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн хĕрӳллĕн кĕрешеççĕ, малта пыракан колхозсен ĕç опычĕпе туллин усă кураççĕ.

Крупская ячĕпе тăракан тата «Çĕнĕ Алтăш» колхозсем государствăна тырă памалли обязательствăсене тултарчĕç. Крупская ячĕпе тăракан колхоз кĕлтесене капана хывса лартни эрне ытла ĕнтĕ. Çак вăхăтра ку колхозра авăн çапас ĕç хĕрсе пычĕ. Пур молотилкăсем те ĕçре, авăна тăпачăсемпе те çапаççĕ. 10 плугпа кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Колхозăн махорка енĕпе ĕçлекен звенисем махоркăна йăлтах касса пуçтарса кĕртрĕç. Йĕтĕн татса пĕтерне, пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ.

«Çĕнĕ Алтăш» колхозра «МК-1100» молотилкăпа кунĕн-çĕрĕнех авăн çапаççĕ. Молотилка кулленех 10 тонна таран тырă çапса кăларать.

И. ДАНИЛОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Мĕнпур обязательствăсене парса татнă

ВАРНАР, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Кольцовкăри Ленин ячĕллĕ колхоз, Сталин юлташăн приказĕсем çине отвечлесе, государствăна памалли мĕнпур обязательствăсене тата натуроплатăна та тӳлесе татнă, пĕтĕм тырра капана хывнă, халĕ талăкĕпех авăн çапать.

А. ВАСЯНИН,
Колхоз председателĕ.

1000 лавлă хĕрлĕ обоз

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем çине отвечлесе, ĕнер районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем государствăна тырă пама пин лавлă хĕрлĕ обоз организациленĕ. Государствăна пĕр кун хушшинче виçĕ пин центнер ытла тĕштырă, пахча-çимĕç леçсе панă.

С. ШАДИН.

Виçĕ колхоз авăн çапса пĕтерчĕ

СЕНТЕРВАРРИ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе, государствăна ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесе парас ĕçе срокчен пурнăçласа, Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн пирĕн районри нумай колхозсем вăйлăн кĕрешеççĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне района татах икĕ колхоз — Макаç ялсоветĕнчи «17-мĕш партсъезд», Баниково ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç.

Кĕлте кӳрсе капана хывассишĕн, авăн çапса пĕтерессишĕн кашни колхозрах хĕрӳллĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç те юлашки кунсенче чылай вăйланнă.

С. ЖЕЛЕЗКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Шăлан çырли пухатпăр

ÇĔРПУ, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Аманнă боецсене сыватма эмел курăкĕсем пухас тĕлĕшпе августăн 28-мĕшĕнче сентябрĕн 6-мĕшĕ хушшинче районра вунăкунлăх иртерĕç. Çак вунăкунлăхра пĕтĕмпе 630 килограмм шăлан çырли пухнă. Ку ĕçе шкул ачисемпе комсомолецсем активлăн хутшăнчĕç: Сталин ячĕпе тăракан тата Вăрăм Çут шкулĕсем пĕр кун хушшинче 100-шер килограмм шăлан çырли пухрĕç. Эмел курăкĕсем пухас ĕç малалла пырать.

П. МИТРОФАНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче республикăри комсомол организацийĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе менле хутшăнни çинчен сӳтсе явнă.

Кĕрхи çĕртме — çитес çулхи вăйлă тырпулăн кĕрешес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнать. Çакна ăнланса илнĕ комсомол организацийĕсем ку ĕçе пысăк тимлĕхпе пăхаççĕ. Канаш районĕнчи «Красное пламя» колхоза 12 комсомолец. Вĕсем уборкăра кашниех 200-шер ĕçкунĕ туса, ĕçе пуçласа 250-шар ĕçкунĕ таран тунă. Колхоз уборка ĕçĕсене вĕçлесен, комсомолецсем çийĕнчех кĕрхи çĕртме тума пуçланă. Планпа кĕрхи çĕртме 340 гектар тумалла пулсан, 180 гектар тунă та ĕнтĕ. Çавăн пекех Элĕк районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри комсомол организаци те кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе лайăх ĕçлет.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ çакăнпа пĕрлех комсомолăн республикăри нумай организацийĕсем кĕрхи çĕртме тума ку таранччен тытăнманнине палăртрĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах комсомолăн Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Улатăр тата Пăрачкав районĕсенчи организацийĕсем начар ĕçлеççĕ. Çĕмĕрле районĕнче, сăмахран, комсомолăн колхозсенчи вуншар организацийĕсем çак ĕç тулашĕнче тăраççĕ. Республикăра кĕрхи çĕртме тума тытăннăранпа 15 кун ытла иртрĕ, апла пулин те ВЛКСМ Çĕмĕрле райкомĕ (секретарĕ Кощеева юлташ) государствăн çакă питех те кирлĕ заданине пурнăçлама колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксене мобилизацилес тĕлĕшпе ку таранччен нимĕн те туман.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ ВЛКСМ райкомĕсене, колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи мĕнпур комсомол организацийĕсене кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе халех хĕрӳллĕн тытăнма, çитес кунсенчех кĕрхи çĕртме тăвас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерме хушнă.

Ку ыйтăва комсомолецсен пухăвĕсенче сӳтсе явмалла. Комсомолецсен пухусенче кĕрхи çĕртме тумалли плана хăйсен умне пурнăçлама тăратмалла. Кĕрхи çĕртме усси çинчен анлăн ăнлантарса памалла. Плугарьсен пулма чи лайăх комсомолецсене, союзра тăман çамрăксене те, активлисене уйăрса лартмалла, ку ĕçе мĕнпур колхозниксене мобилизацилемелле.

Комсомол организацийĕсен çук вĕсене çамрăксен ушкăнĕсем иртермелле.

Комсомол организацийĕсен çапла тăвас пулать: кашни плугарь-комсомолец кĕрхи çĕртме тухăçлă та пахалăхлă çĕртмелле, 18—20 сантиметр тарăнăшĕ сухаласа, Нагорный меслечĕпе лашасене улăштара-улăштара ĕçлесе кулленхи ĕç нормине ăнăçлăн тултартăр тата ирттерсе тултартăр.

Комсомолка-трактористкăсен, хĕрарăмсен трактор бригадисен хăйсен тракторĕсене талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттермелле.

Комсомолăн Вăрмар, Сĕнтĕр районĕсенчи чылай организацийĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре колхоз çамрăкĕсен социализмлă ăмăртăвне пуçарма сĕннĕ. ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ вĕсен сĕнĕвне ырласа, ВЛКСМ райкомĕсене ăмăртăва анлăн пуçарса ертсе пыма хушнă. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре палăрнă комсомол организацийĕсемпе çамрăк сухаçăсене ВЛКСМ Обкомĕн Хисеплĕ грамотисемпе наградăлама тăратмалла.

Кĕрхи çĕртме тумалли плана срокчен пурнăçа кĕртнĕ комсомолăн районри организацине пама ВЛКСМ Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă.

ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсен ВЛКСМ Обком бюровĕн çак постановленине пуçламĕш организацисем мĕнле пурнăçа кĕртнине куллен контрольлесе тăмалла тата вĕсене кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçлама ĕçлĕн пулăшса пымалла.

Çак ӳкерчĕк çинчи Мария Леонтьевăна Чăрăшçырма (Вăрмар районĕ) çыннисем астăваççĕ пулĕ. Вăл вăрçă пуçлансан тепĕр кунне фронта тухса кайнă. Сахал мар снарядсемпе минăсем çурăлнă çĕрте, пульăсем çăмăр пек тăкăннă çĕрте пулнă. Сахал мар вăл боецсене вилĕмрен çăлнă. Пĕррехинче госпитале питĕ йывăр аманнă боеца—Черевиченкăна илсе пынă. Унта Мария Леонтьева пулнă. Боецăн пурнăçĕ вĕçленсе пынă, унăн ӳт-пĕвĕнчен юлашки юн тумламĕсем юхнă, унăн чĕри вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланнă. Мария Леонтьева хăйĕн 250 грамм юнне парса, боеца вилĕмрен çăлса хăварнă. Унсăр пуçне вăл тепĕр боец валли татах 300 грамм юн панă.

Мария Леонтьевăпа пĕр ялта çуралса ӳснĕ, пĕр больницăра ĕçленĕ юлташсем, сире унăн паттăр ĕçĕ фронта вăйлăнрах пулăшса тăма хавхалантартăр.

РЕСПУБЛИКĂРИ ХĔР-ТАНТĂШСЕНЕ!

(Фронтран килнĕ çыру)

Тылри хĕр-тантăшсем! Сире фронтри пĕр госпитальри чăваш хĕрĕсенчен боевой салам!

Пĕр çул каярах эпир те, сирĕн пекех, тылра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеттĕмĕр. Хальхи вăхăтра эпир, икĕ чăваш хĕрĕ, пĕр госпитальре медсестрасем пулса ĕçлетпĕр. Таван çĕршывшăн, пулас тĕлейлĕ пурнăçшăн çапăçса аманнă командирсемпе боецсен пурнăçне çăлса хăварассишĕн эпир ырми-канми ĕçлетпĕр. Çав хушăрах хамăрăн медицина пĕлĕвне кунран-кунах ӳстерсе, командованин приказне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыратпăр. Аманнă командирсемпе боецсен сывлăхĕсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе лайăх ĕçлетпĕр. Çавăншăн пире командовани „Отличник санитарной службы“ значокпа наградăларĕ. Çак награднăна илме тивĕçлĕ пулнишĕн савăнса, эпир малашне татах та лайăхрах ĕçлеме сире сăмах паратпăр.

Юратнă тантăшсем, пирĕн сирĕнпе пĕр тĕллев—тискер фашизма тĕппипех аркатса тăкасси, тăван çĕршыва нимĕç пусмăрĕнчен хăтарасси. Çавăнпа эсир те фронт умĕнчи хăвăрăн тивĕçлĕхе ан манăр. Кирек мĕнле ĕçре те хастарлăн ĕçлĕр. Часрах çĕнтерӳ тума пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшăр. Халĕ сирĕн умра ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес задача тăрать.

Çамрăк хĕрсем, фронтовиксен ĕçĕ—сире, сирĕн ĕç—пире, фронтовиксене, хавхалантартăр. Çавăнпа малашне пĕр-пĕрин патне çырусем çырса тăрар. Пире хăвăрăн стахановла ĕçĕрсем çинчен тăтăшах пĕлтерсе тăрăр. Пирĕн адрес: 63449 мĕш Полевая почта.

Медицина службин сержанчĕсем **В. Кузьмина** (Елчĕк районĕнчен), **А. Юрьева** (Куславкка районĕнчен).

Ют çĕршывсенче

Италири лару-тăру

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: американецсен 5-мĕш армийĕн малти отрячĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкса, Неаполь районĕнче паха позицисем тытса илнĕ. Нимĕçсем хирĕç тăнă пулин те, çарсене çĕр çине план тăрăх антарнă.

Ĕнер десант чаçĕсем Вентотене утравне йышăнса илнĕ (çав утрав вăл Неапольрен 40 миля хĕвеланăçнерехре ларать). Утрав çинчи итальянецсен гарнизонĕ союзниксене парăннă.

Англин 8-мĕш армийĕ, нимĕçсем хирĕç тăнине пăхмасăрах, Италин кăнтăр пайĕнче хĕвелтухăçĕнчи, хĕвеланăçĕнчи çырансен хĕррипе малалла куçса пынă. Тăшман каялла чакнă чухне çулсемпе кĕперсене вăйлăн ишĕлтерсе пынă. Ница хули, Кăнтăр Италин хĕвеланăç пайĕнче лараканскер, союзниксен аллинче тăрать.

Союзниксен хĕвелтухăç енчи çыран тăрăх пыракан колоннисем Монастераче-Марина пунктне çитнĕ.

Союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем ĕнер кăнтăрла Капуа тата Канчелло пункчĕсенчи кĕперсемпе çулсене, Козенцори çулйĕрсене тата ытти объектсене атакăланă. Истребитель-бомбардировщиксем Сардинин кăнтăр пайне тапăннă.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: итальянецсен Неаполь районĕнчи çарĕсем унта пырса аннă Англипе Америка çарĕсем енне куçнă, вĕсем Германи чаçĕсене хирĕç пынă çапăçусене хутшăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, 5-мĕш арми Итали çĕрĕнче çирĕпленсе пынă, нимĕçсен темиçе контратакине сирсе янă. Союзниксен çарĕсем Салерно портне тытса илнĕ, вĕсем Итали çĕрне шалтан шала кĕрсе пыраççĕ. Англин 8-мĕш армийĕ те малалла малтанхи пекех хăвăрт куçса пырать. Ĕнер Тарантона оккупацилесе пĕтернĕ.

Сентябрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер кăнтăрла союзниксен авиацийĕ Неаполь районĕнчи чугун çул обьекчĕсене, кĕперсене тата аэродромсене тапăннă. Хула тĕлĕнче сывлăшра темиçе хут çапăçса илнĕ.

Итали хулисенчи урамри çапăçусем

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стокгольмран пĕлтернĕ тăрăх, „Свенска дагбладет“ хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Италири хăшпĕр хуласен урамĕсенче итальянецсемпе нимĕçсем пĕр-пĕринпе çапăçаççĕ, пуринчен ытла Веронăра хаяррăн çапăçаççĕ. Венецие, Милана тата Турина Итали войскисем йышăнса илнĕ. Торонтора урамсенчи çапăçусенче итальянецсем çĕнтернĕ. **Илнĕ хыпарсем тăрăх, итальянецсен вăйĕсем Флоренцирен Болоньяри войскăсене пулăшма пыраççĕ.** Милана çитме тăрăшакан нимĕçсене итальянецсем Брюшиа хулинче чарса тăраççĕ.

Итали самолечĕсем Балканран кайни

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян итальянецсен темиçе самолечĕ Балканран Кипрти, Тобрукри тата Дернри авиаци базисем çине вĕçсе пырса аннă.

ИТАЛИ КАРАПĔСЕМ ГИБРАЛТАРА ПЫНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гибралтара Италин 2 çăмăл крейсерĕ, 2 эсминецĕ тата 2 пулăшуллă авианосецĕ пынă. Çав карапсен командованийĕ карапсем союзниксене парăнни çинчен пĕлтернĕ.

ИТАЛИ КАРАПĔСЕМ МАЛЬТА УТРАВĔ ПАТНЕ ПЫНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Сентябрĕн 10-мĕшĕнче каçхине Мальта утравĕ патне итальянецсен çар карапĕсем пынă, вĕсем хушшинче 4 линкор, 7 крейсер, 6 эсминец пур.

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Италин тинĕс-çар флочĕ пысăк çухатусем тӳснĕ пулин те, унăн çар карапĕсем чылай-ха. Итали флотĕнче хальхи вăхăтра çакăн пек карапсем пур: 7 линкор, 3 авианосец, 2 йывăр крейсер (иккĕшне те сиенленĕ), 9 çăмăл крейсер (тата иккĕшне туса пĕтереççĕ), 25 эсминец, 60 подводнăй лодка тата пысăк мар çар карапĕсем чылай.

ИТАЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ ÇЫХĂНУСЕНЕ ТАТНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бадольо маршал Германипе çыхăну тытма пăрахнă.

НИМĔÇСЕМ РИМА ТЫТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: итальянецсен ставки пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Рима тытса илме тăрăшаççĕ, вĕсем унта пуканелле правительство туса хурасшăн.

Иртнĕ çĕрле Рим çине тахăш çĕршывăн авиацийĕ бомбăсем пăрахнă. Бомбăсене хăш çĕршывăн авиацийĕ пăрахнине пĕлеймен.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Германири радио çапла пĕлтернĕ: Германи çарĕсем паян Рим çине наступлени тума пуçланă, итальянецсен Римри çарĕсен командованийĕ вара парăннă.

Германири радио пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Генуйăна, Специйăна, Болоньяна, Веронăна, Кремонăна тата Триеста тытса илнĕ.

ХРОНИКА

Майăн 26-мĕшĕнче Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе договор тунăранпа çулталăк çитнĕ май Великобритани правительстви Совет правительствине парнелесе картина панă. Картина çинче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ А. Иден господин 1942 çулхи майăн 26-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче çав договора алă пуснине кăтартнă. Вăл картинăна Англири паллă художник Сэлисбери ӳкернĕ. Ана Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн уйрăм ÿкерчĕк Шурă Залра вырнаçтарнă.

Пĕлтерӳ

Паян, сентябрĕн 12-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) лекци пулать. Лекци теми:

«Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен».

Лекцие ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Якерсон** юлташ вулать.

Билетсене парткабинет библиотекинче сутаççĕ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Фронтовиксен çемьисем пулăшу илсех тăраççĕ

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа Шăхасан районĕнче фронтовиксен çемьисене 3.091.300 тенкĕ пособи, 2.523.635 тенкĕ пенси парса пулăшнă. Кунпа пĕрлех тата çарти çынсен çемьисене, закон тăрăх, ялхуçалăх налогĕпе хваттер укçи тӳлессинчен хăтарнă, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратас енĕпе çăмăллăхсем панă.

Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çемьисене 6 пин кубометр таран вутă турттарса панă, темиçе çĕр метр трикотаж, кĕпе-йĕм, тумтир, атă-пушмак панă. Фронтовиксен 47 ачине ача сачĕсене вырнаçтарнă.

Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çемьисене пулăшас ĕçе Ушанар, Анат Сурăм, Шăхасан ялсовечĕсенче лайăх туса пыраççĕ.

Районра фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çемьисене пулăшма уйрăм фонд организациленĕ. Унта 264 пăт тĕштырă, 400 пăт ытларах çĕрулми пухăннă. Кунпа пĕрлех тата госбанкра фронтовиксен çемьисене пулăшмалли уйрăм счет уçнă, вăл счет çине кăçал тĕрлĕ организацисемпе колхозсем 90 пин тенке яхăн укçа хывнă.

Çак асăннă фондсенчен кăçал пĕтĕмпе 1236 çемьене пулăшу панă. Эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисене пулăшасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Сăмахран, эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ Сергеева юлташăн çемйинче 6 ача, ăна 800 тенкĕ укçа, 10 пăт çĕрулми, 5 пăт тырă парса пулăшнă. Партизан арăмне — Белокурова юлташа 700 тенкĕ укçа, 6 пăт тырă тата çĕрулми панă. Шуркасси ялсоветĕнче пурăнакан Рязанова Агрипинăн 5 ача, ăна пур енĕпе те пулăшу парса тăнă. Кун пек тĕслĕхсем татах та нумай.

Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсене кăçал пурне те 0,10—0,15-шер гектар çĕр уйăрса панă. Çав участоксене акса хăварма 2673 пăт вăрлăх укçасăрах тата вăхăтра пухса панă. Кунпа пĕрлех МТС эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çĕр лаптăкĕсене укçасăрах сухаласа, акса панă. Район центрĕнче фронтовиксен çемьисене пулăшас майпа 78 хуçалăха 750 пуç чăх-чĕп панă.

Фронтовиксен çемьисене çакăн пек пулăшни вĕсене колхозра тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать. Эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсем кăçал пурте тенĕ пекех тырă вырнă çĕре хутшăнчĕç.

Районри ялсенчен фронта кайнă çынсен пособи илсе тăракан çемйисем те колхозсенче лайăх ĕçлеççĕ. «Красный партизан» колхозри 79 çулхи мучи И. Федоров юлташ колхозăн пур ĕçĕсене те хутшăнать: вăл кĕлте те кӳрет, тырă леçме те каять, транспорт инвентарĕсене те юсать. Тырă вырнă чухне вăл çурлапа кунне 0,13 гектар вырса пычĕ, кăçал вăл 255 ĕçкунĕ тунă.

Çав колхозри фронтовик арăмĕ стахановка Мария Филиппова кăçал 597 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Сталин юлташăн юлашки приказĕсемпе паллашнă хыççăн вăл кăçал татах тепĕр 200 ĕçкунĕ тума сăмах панă.

Уйкас Кибекри Тельман ячĕпе тăракан колхозри фронтовик амăшĕ 70 çулхи Парасковья Терентьева кунсерен 0,17-шер гектар тырă вырса, нормăна ытлашшипех тултарса пычĕ. Августăн 17-мĕшĕнче вăл хăйĕн фронтри ывăлĕнчен çыру илчĕ. Çав çырупа савăнса, вăл пĕр кун хушшинче 107 çĕмел турĕ, 7,5 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕ.

Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен упăшкисем тата фронтовиксем хăйсен çемьисене кулленех пулăшса тăнăшăн савăнса колхоз председателĕсем патне вуншар çырусем çыраççĕ. Хăйсен çемьисемшĕн тăрăшнăшăн вĕсем колхоз председателĕсене, колхозниксене тав тăваççĕ.

Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çемьисене пулăшасси—калама çук пысăк политикăллă ĕç пулса тăрать. Анчах хăшпĕр ялсовечĕсемпе колхозсен руководителĕсем çак ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Энтриялĕ, Ямаш тата Ухман ялсовечĕсенче фронтовиксене çителĕклĕ таран пулăшу памаççĕ, çавăнпа çав ялсенче пурăнакансенчен жалобăсем нумай килеççĕ.

Кунпа пĕрлех иртнĕ çулсенче райфопа уполнаркомзаг, фронтовиксен çемьисене тĕрĕс шута илмен пирки, вĕсене çăмăллăхсем парас тĕлĕшпе йăнăш тунисем пулнă. Кăçал ун пек çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтернĕ. Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çемьисене пулăшасси кунран-кунах вăйланса пырать.

С. АСЛАН,
В. ВЕСЕЛОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Çулйĕр Управленийĕн дорснабне ялан ĕçлеме снабжени ĕçне пĕлекен опытнăй бухгалтер васкавлă кирлĕ, çавăн пекех тата лаша пăхакан возчик та кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, дом № 2, начальник Дорснаба. Телефон 1—88.

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш управленине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: административнăй тата хуçалăх ушкăнĕн начальникĕ, транспорт инспекторĕ, икĕ экономист, машинистка.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Связи, 3 этаж, комната 14, отдел кадров.

ХĔРЛĔ ÇАР ÇУРТНЕ çакăн пек работниксем кирлĕ: художник, швейцар, уборщицăсем, рабочи-пожарник. 3—1

ПАРТКУРСРА ĕçлеме учебнăй чаçăн секретарĕ, конюх, вахтерсем тата техничка кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чернышевская, 5, Парткурсы.

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн радиотрансляци линийĕсен дирекцийĕ пур учрежденисемпе организацисене çакăн çинчен пĕлтерет: 1943 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа радиотрансляци линийĕсен дирекцийĕ, Çыхăнăвăн Шупашкарти конторинчен уйăрăлса, хăйне уйрăм баланс çине куçнă.
Радиошăн тӳлемелли абонемент укçине Госбанкăн Чăваш конторинчи 14607-мĕш №-лĕ расчетнăй счет çине куçарса тăмалла.
Парăма кĕнисем тӳлев укçине 5 кун хушшинче парса татмасан, радио точкисене линирен кăларса пăрахаççĕ, вара çĕнĕрен кĕртес пулсан черет çитсен тин кĕртсе параççĕ.
Радиотрансляци линийĕсен дирекцийĕ.

Шупашкарти арман комбинатне старши бухгалтер кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 15. Телефон 2—16. 3—1

Иртнĕ август уйăхĕн 29-мĕш числинче ЛАША ÇУХАЛНĂ. Паллисем çакăн пек: тĕсĕ – шупка сарă, çилхипе хӳри хура.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Ишлейский район, Правление колхоза „Çеçмер“.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 231 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л